Рег. № 107
41-109
3100



# Геройсен каламĕ

Чăвашгосиздат ■ 1941

# ЛАПТЕВ КАЛАСА ПАРАТЬ

Пирĕн батарея Пэрк-Ярви станцинчен пĕр вунă километра яхăн çурçĕрелле вырнаçнăччĕ.

Хĕлле. Уллах кăна вăрман уçланки, йĕри-тавра чăрăш йывăççисем. Хамăр позицие вăрмантан ан асăрхаччăр тесе, эпир орудисем умне те, хыçне те çамрăк чăрăшсем ларта-ларта тухрăмăр. Сывлăшран сăнасран та орудисене лайăх пытарнăччĕ. Аяккипе юпасем лартса, çиеле

витнĕччĕ. Çав çивитти çине юр çуса кайрĕ те, эпир юр çине йывăç тураттисем сапала-сапала тухрăмăр.

Расчетсем çакăнтах, çĕр пўртсенче пурăнатчĕç. Çĕр пўртсенчен орудисем патне çўреме ятарласах чаваласа сукмаксем хывнăччĕ.

Хыçалта, пĕр аллă - çитмĕл метр вăрман ăшнелле, аслă лейтенантăн — Маргулис юлташăн, батарея командирĕн, çĕр пўрчĕ ларатчĕ.

Командовани хушнине пурнăçласа, батарея куллен тăшман çине вут тăкатчĕ, хăйĕн йывăр снарячĕсемпе персе тăшманăн пулемет йăвисене, блиндажĕсене

тата ытти укреплениййĕсене арката-арката ывăтатчĕ. Анчах та темĕн чул персен те пирĕн снарядсен хисепĕ чакмастчĕ, чакма мар вăл пушшех ӳссе пыратчĕ,— пирĕн пата çине-çинех снарядсем турттарса кӳрсе тăратчĕç: вăл вăхăтра Маннергейм линине пĕтĕмĕшле штурм тăвасса кĕтетчĕç.

Эпир белофинсене питех те хытă пĕçертрĕмĕр, вара вĕсем пирĕн батарейăна çавăрса илсе тĕппипех аркатса тăкма шухăш тытаççĕ иккен. Çакна вĕсем сивĕ те тĕтреллĕ кун, декабрĕн 23-мĕшĕнче, пурнăçласшăн пулаççĕ.

Ирпе, çутăлнă - çутăлманах,

штабран, телефонпа батарея командирӗ эпир вырнаҫнӑ вырӑна йӗлтӗрҫӗ-белофинсен отрячӗ кӗрсе кайни ҫинчен хыпар илет.

Аслӑ лейтенант Маргулис юлташ ҫавӑнтах хамӑра сыхлас тӗлӗшпе уйрӑм мерӑсем йышӑнать: батарея патӗнчи дозора тата та ытларах ҫынсем тӑратать; пире, оруди расчечӗсене, кашнинех орудисем патне харпӑр хӑй вырӑнне йышӑнма приказ парать, ҫавӑнпа пӗрлех пире вӑл ҫакна та асӑрхаттарать: пирӗн, хӑшпӗрисен (камсем-камсем иккенне вӑл ҫавӑнтах кӑтартса парать), кирлӗ пулсан, орудисем патӗнчен уйӑрӑлса, контратакӑна каймалла пулать.

Хăнасем вăрах кĕттермерĕç. Кăнтăрла сулăнсанах пăшал сасси илтĕнсе кайрĕ: кăна ĕнтĕ пирĕн сылтăм флангра тăракан дозор белофинсем курăннине систерсе çапла сигнал пачĕ. Белофинсем йĕлтерсемпе вăрмантан килсе тухрĕç.

Аслă лейтенант Маргулис çавăнтах управлени взводĕнчен вунпиллĕк красноармейца батарея патне илсе пычĕ, çапăçу самантрах пуçланса та кайрĕ.

Белофинсем, пиртен темиçе хут йышлăрах пулнăскерсем (вĕсем виççĕртен те ытла пулнă), тӳрех пирĕн батарейăна хупăрлама тытăнчĕç.

Эпир вĕсене хирĕç пăшалпа

персе тăтăмăр. Анчах та, акă вĕсем кăшкăра-кăшкăра тӳрех батарея çине тирĕнчĕç.

Эпир вĕсене пурте пĕр харăс пулеметпа, винтовкăпа, револьверпа персе кĕтсе илтĕмĕр. Финсем чакрĕç.

— Батарея, огонь!—команда пачĕ аслă лейтенант.

Пирĕн орудисем тăваттăшĕ те кĕске дистанцирен кĕрслеттерчĕç.

Çĕр чĕтресе кайрĕ, вăрман хĕрринчи пысăк йывăçсем сывлăшра çĕклене-çĕклене çапăнчĕç. Вутлă шквал пирĕн паталла килекен белофинсене шăпăрпа шăлнă пекех шăлса ывăтрĕ.

Финсем пĕр самантлăха шă-

пах пулчĕç. Анчах та пăртак тăрсан каллех ак, хальхинче паçăрхинчен те ытларах тискерленсе, пире атакăлама тытăнчĕç. Ĕнтĕ халĕ вĕсем пире умран мар, аяккинчен, пирĕн орудисем илеймен çĕртен, хĕсме тытăнчĕç.

Эпĕ кăшкăратăп:

— Аслă лейтенант юлташ, финсем сулахайра!—тетĕп.

А пирĕн командир, аслă лейтенат Маргулис, аманнă иккен, выртать. Вăл мана чĕнет:

— Лаптев, пар-ха мана винтовка!—тет.

Эпĕ командир валли пăшалне тупасса тупрăм, анчах ниепле те хăй патне пыма май çук хамăн, —

пульăсем çумăр пекех çăваççĕ.

Винтовкине авăрлатăп та командира ывăтса паратăп.

Вăл каллех пеме пикенет. Белофинсене пĕрин хыççăн теприне çĕре пере-пере антарать.

Пăхатăп та çаврăнса, белофинсем ĕнтĕ пирĕн снарядсен склачĕ патнех çывхарса çитнĕ. Ĕнтĕ вĕсем хăйсен вут хыптармĕш бутылкисене ывăтаççĕ. Ĕнтĕ хăшпĕр ещĕксем çунма та тытăннă.

Мĕн тăвас? Халех ывтăнатпăр вĕт сывлăша!

Пачах урăх çын сассипе кăшкăрса яратăп:

— Аслă лейтенант юлташ, снарядсем çунаççĕ!

А вăл мана çапла ответлет:

— Тӳрĕ наводкăпа огонь! Снарядсене унта пирĕнсĕрех сӳнтерĕç.

Чăнах та, çунакан ещĕксене кĕçĕн лейтенант Сидоров юлташ ытти боецсемпе пĕрле юр çине сапала-сапала пăрахнă та хыпса илнĕ пушара çийĕнчех сӳнтернĕ.

— Çапла, тетĕп, тӳрĕ наводкăпа çунтармалла!

Кунта вара мана самаях тарлама тиврĕ.

Оруди патĕнче эпĕ пĕр-пĕчченех тăрса юлтăм. Юлташсенчен хăшне вĕлерне, хăшĕсем сулахай, сылтăм енче, е хыçалта тăшмана батарея патне пыма чарса тăраççĕ. Вĕсем винтовкăсемпе переççĕ.

Манăн вара—оруди. Винтовкăран пенĕ пекех çав орудирен манăн пĕр-пĕчченех перес пулать. Пысăк та йывăр тупă манăн хамăн личнăй пăшал пек пулса тăчĕ...

Финсем уçланкăра, орудипе тĕлме-тĕл. Финсем вăрман хĕрринче. Переççĕ, ушкăн-ушкăн пухăнаççĕ, чупа-чупа пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçаççĕ. Тăшман пулемечĕсемпе автомачĕсем пульăсем акса çеç тăраççĕ, мана пуçăма çĕклеме те памаççĕ.

Эпĕ орудийĕн юр çинче чĕкеç хÿри пек сарăлса тăракан тимĕр станинисем хушшинче пĕшкĕнсе ларатăп.

Панорама патне пырăп тесе

ан та ĕмĕтлен ĕнтĕ. Пыма та кирлĕ мар. Тӳрĕ наводкăпа перетĕп. Пуçа кăлармасăр алла çеç хăпартатăп та, затворне уçатăп. Унтан снарядне хăпартатăп, авăрлатăп. Зарядне те çав майпах вырнаçтаратăп. Унтан вара, пăраканнипе хăпартакан механизмсемпе иккĕшинпе те пĕр харăс ĕçлесе, белофинсене „мушка çине" илетĕп—ăнланмалларах каласан—белофинсен хăш группи çине персен усăллăрах пулĕ-ши тесе куçпа виçсе илетĕп.

Белофинсем пĕр минут та тытăнса тăмаççĕ. Тăтăшах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна чупа-чупа куçаççĕ. Эпĕ çакна асрах тыта-

тăп. Чупаканни çине хăй çине мар, унăн умне тĕллетĕп.

Тĕллетĕп те, раз!—шнуртан туртатăп, шнурăн вĕçĕ умрах, хамăн чĕркуççийĕм çинчех.

Оруди персе ярать.

Асăрханарах умма пăхатăп, ăçта лекнине сăнатăп.

Белофинсене чăлпар! çеç салатса янă...

Каллех алăпа çӳлелле кармашатăп, çăраççине уçатăп. Хам çиех пушă гильза тухса ӳкет. Ăна аяккалла, хĕрринелле, ывăтатăп.

Каллех орудие авăрлатăп. Каллех, меллĕ самант тупса, белофинсен ушкăнĕ çине перетĕп.

Эпĕ снарядсене оруди ăшне,

колпачек пăрăннипе пăрăнман-нине пăхмасăрах, хуратăп. Пăх-каласа-туса тăрсан, час унта хăв-на та пăрса пăрахĕç.

Ăçта пăх—унта финсем. Хам ĕçлетĕп, хам куçа-пуçа унталла-кунталла вылятса çеç тăратăп. Час-часах винтовкăпа револь-вера та ĕçе яма тивет. Ман ум-ра унта, станина синче, хăма çинчи пек, пурте куç умĕнче—пăшал патронĕсем те, револьве-рĕн те. Пĕтĕм арсенал хатĕр.

Çапăçу çаплах пырать-ха. Хĕрӳ. Дивизион командирĕ капитан Хоменко пĕр вунă боец пухать те пирĕн паталла ыткăнать.

— Маргулис юлташ! Пулăшма пыратăп!—тесе кăшкăрать вăл.

Суранланнă командир çавăнтах команда парать:

— Атакăна! Тăван çĕршывшăн! Сталиншăн!

Хăй вара çавăнтах сиксе тăрса боецсене ертсе тăшман çинелле ыткăнать.

Анчах та çак атака хыççăн та белофинсен йышĕ сахал мар юлать-ха. Вĕсем çаплах-ха батарейăна çавăрса илес шухăшне пăрахмаççĕ, вунпиллĕкшерĕн-çирĕмшерĕн пухăнса пирĕн çине ушкăнăн-ушкăнăн тапăнаççĕ.

Çавăн пек ушкăнсенчен пĕри кăшкăрса тӳрех манăн оруди çине тапăнчĕ.

Эпĕ орудирен пеме ĕлкĕртĕм— тапăнакан финсенчен тĕсĕ те

юлмарĕ. Анчах та хам снарядпа эпĕ чут çеç хамăн туппăма та ватса пăрахаттăм,—снаряд çав тери çывăхра çурăлчĕ. Снаряд ванчăкĕсем оруди питлĕхне пĕтĕмпех хăмпăлчăлатса пăрахрĕç.

Ĕçлетĕп-ха. Çăмăлах мар. Ĕнтĕ хам, мунчара пулнă пек, чăм шыва ÿкрĕм. Калама кăна çăмăл—пĕччен сакăр çыншăн ĕçлен вĕт-ха! Ун пек чухне вăтăр градуслă сивĕ те уçăлтараймасть.

Сасартăк хыçра тем чăштăртатнă пек илтĕнчĕ. Нагана тăсса вăльт! çеç çаврăнса тăратăп:

— Кам вăл?

— Ан пер, Лаптев, эпĕ ку, Пулькин, батарейăн тимĕрçи.

Пăхап—тĕрĕсех, Пулькин. Тĕ-

лĕнетĕп: епле-ха вăл кунта çитиех шуса çитме пултарнă, пуçа та çĕклеме май çук-çке, пасса! Белофинсен пульисем чавнипе пĕтĕм таврари юр çаврăнса вĕçсе тăрать.

Анчах ыйтса-туса тăма халĕ вăхăт мар.

Пулькин мана пулăшма тесе шуса пынă иккен.

Эпĕ савăнтăм.

— Айта, — тетĕп, — снарядсем парса тăр.

— Мĕнле парса тăраççĕ ăна, — тет вăл.

Пулькин нихăçан та снаряд тытса курман; йывăр снарядсене мĕнле тытса çĕклес-ха; алăран ярас мар тесен, мĕнле йăтса

пырас,—ăна-кăна нимĕн те пĕлмест вăл.

Тимĕрçĕ. Пирĕн батарейăра лашасем таканлатчĕ. Колхозран килни те нумаях пулмасть. Анчах тĕреклĕ ача,—эпĕ хам та тĕреклĕ те, вăл тата тĕреклĕрех, манран çур пÿ çÿлĕрех теме пулать.

Мана пулăшма шăп çакăн пек çын кирлĕ пулнă та.

Эпĕ Пулькина çавăнтах снарядсене мĕнле тытмаллине кăтартрăм, вăл мана снарядсем парса тăра пуçларĕ, эпĕ кăтартнă тăрăх вĕсене тупă кĕпçин камерине лартса вырнаçтарать.

Пулькинпа иксĕмăр ĕçлеме тытăнтăмăр. Ĕç хута кайрĕ ĕнтĕ пирĕн! Тытăнтăмăр хайхи фин-

сене турама, аякран пăхсан кирек кам та: оруди патĕнче иккĕн мар, пĕтĕм боевой расчет ĕçлет темелле. Ăçтан кăна вăй тухать! Астăватăп, Пулькин мана снаряд тыттарчĕ. Сасартăк хăлха патĕнче пăшал сасси кĕрст! турĕ.

Çавăрăнса пăхрăм та—белофинсен офицерĕ юр çине персе анчĕ, аллинче хăйĕн граната.

Кăна ĕнтĕ Пулькин ерçнĕ хушăра майлаштарчĕ.

Ĕçлерĕ, ĕçлерĕ те манпа Пулькин, сасартăк, çаврăнса пăхатăп та, вăл çук та иккен.

— Пулькин! Ăçта эсĕ, Пулькин?..

## МАЛАЛЛА ПУЛЬНИН КАЛАСА ПАРАТЬ

Эпĕ атакăна тухсаттăм. Хам ăçта кайнине Лаптева каласа хăвараймарăм çав — ара, унта вăрмантан пĕр вунпилĕк белофина яхăн сикрĕç тухрĕç те. Кайрăм çав вара. Ĕçсем, тетĕп, çавнашкал çаврăнса тухаççĕ пулсан,Лаптев кунта мансăрах маххă парас çук-ха. Вăл ĕçре пултаракан ача-ха, тетĕп.

Чи малтанах мана хамăрăн боецсем те çывăхрах пур пек

туйӑнчӗ. Чупса ҫитетӗп те— хамӑрӑннисем ҫук та иккен, белофинсем шайкипех, а эпӗ кунта пӗр-пӗчченех мӗн.

Ҫавӑнтах юр ҫине тирӗнетӗп те вилле хывса выртатӑп.

Вӗсем те тӑсӑла-тӑсӑла выртрӗҫ.

Манпа белофинсем хушши пӗр саккӑр-вуннӑ метр пулать.

Эпӗ винтовкӑпа, вӗсем автоматсемпе. Илтетӗп, тем кӑшкӑрашаҫҫӗ, тем синчен хӑйсем хушшинче калаҫса татӑлаймаҫҫӗ.

Винтовка ҫӗклетӗп те тӗллемесӗрех кӗрст! тутаратӑп.

Пӗри ҫаврӑнса та ӳкет.

Пуҫлатӑп вара пуля хыҫҫӑн пульӑпа хӑналама.

Персен-персен обойма ман пĕтсе ҫитрĕ. Кĕсъерен е подсумкăран патрон илсе муталанса тăнă пулсан — пĕтеттĕмех. Юрать-ха запаса эпĕ хăть хăҫан та сулахай ҫанăра обойма тытаттăм.

Ҫапла ҫывăхранах пере-пере эпĕ вуниккĕшне те ăсатрăм пулĕ.

Кун хыҫҫăн вара хамăр чаҫри красноармеецсем иккĕн пулăшма килсе ҫитрĕҫ. Хаваслăрах пулса кайрĕ.

Виҫҫĕн вара эпир белофинсен группине ҫавăнтах аркатса пăрахрăмăр.

Красноармеецсене эпĕ хăйсен командирĕ патне каялла яратăп, хам каллех Лаптев пат-

неллеваскатăп. Лаптев халĕ те-ха паçăрхи пекех пĕр-пĕччен оруди патĕнче кĕрмешет.

Сасартăк çав вăхăтра мана пулеметран çунтарма тытăнаççĕ.

Эпĕ тӳрех юр ăшне чăматăп, чăматăп та шухăшлатăп: ăçтан-ха ку перет? Перессе питĕ çывăх дистанцирен перет.

Йăшăлт та тумастăп, хам çаплах йĕри-таврана сăнатăп.

Таврари йывăççем пурте шурă, юрпа витĕннĕ. Пĕр йывăççи çеç темшĕн хура. Тĕлĕнмелле, ма-ха ун турачĕ çинче юр тăмасть!

Йывăçĕ хăй йывăçах, ытти хăйпе кӳршĕллĕ ӳсекен йывăççем йышшиех.

Çав йывăç çине тимлĕрех пăхма тытăнатăп. Пăхап: хура туратсем хушшинче, юр муклашки пек шап-шуррăн курăнса лара парать шур халат тăхăннă пĕр белофинн. Пулеметпа. Ман çине пăхать.

Эпĕ кăннах хытрăм—ун çинчен куçа та илместĕп. Урапа алла мар, пӳрнеме те сиктерме пултараймастăп хам. Сиктернĕ кăна пул— çавăнтах сан çине тăшман хăйĕн мĕнпур зарядне кăларса та пăрахĕ.

Выртатăп — пӳрнемсем винтовка туяççĕ. Винтовкăм çумрах та çав, анчах мĕн усси!

Сасартăк асăрхатăп: белофинн пуçне пăрать, унăн тем çине пăхмалла ĕнтĕ.

Ман çирен куçне илме çеç ĕлкĕрчĕ ку, эпĕ çавăнтах винтовкăна кап! ярса тытатăп та тĕллетĕп, перетĕп.

Финн мăкăльт çеç тăвать,— урисене çўлелле тăратса йывăç айне персе анать.

Офицер пулнă мĕн.

Çапла тăрăшса оруди патне çитетĕп, каллех Лаптева снарядсем парса тăратăп, пеме пулăшатăп.

Çапăçу пилĕк сехете яхăн пычĕ. Белофинсене батарея патĕнчен сирпĕнтертĕмĕр. Анчах та вĕсенчен сывă юлнисем питĕ сахал пулчĕç. Тăшман отрячĕн чылайăшне, çĕр çитмĕл çыннине

яхăн, эпир пăшалпа, пулеметпа, наганпа пере-пере вĕлертĕмĕр. Тата тепĕр çĕр белофинне Лаптев орудийĕ тăса-тăса вырттарчĕ.

---

Редактор перевода В. Долгов.

НТ 4115. Подписано к печати 4/VII- 41 г.
Объем 0,75. Заказ № 340. Тираж 3000 экз.

Тип. № 1 Управ. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати.

**Цена 45 коп.**